Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

91 (7945) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи чӳк (ноябрь) уйăхĕн 16-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ноябрĕн 17-мĕшĕ – Участковăй кунĕ

## «Çынсемшĕн чи çывăх сотрудник пулмалла»



***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Григорий Геннадьевич Терентьев полицин аслă лейтенанчĕ – Турай тата Чуманкасси ял тăрăхĕсенчи полици участокĕсенчи уполномоченнăйĕ. Вăл пăхса тăракан участоксенче пĕтĕмпе 5 пин çынна яхăн. Участковăйăн вара кашни çемье пирки пĕлме тăрăшмалла. Саккуна пăснă тĕслĕхсене айăпа кĕнисемпе сӳтсе явнă чух, йĕркене пăсассинчен асăрхаттарнă чух унăн учитель те, психолог та пулма тивет – çăмăл ĕç теме май çук. «Кулленхи ĕçри тĕп задача – ял тăрăхĕсенчи халăха чи çывăх сотрудник пуласси», – пĕлтерет Григорий Геннадьевич.***

## «Эпир малта пыракан пилĕк регион шутĕнче»

Чăваш Республикин строительство министрĕ Александр ГОНЧАРОВ журналист ыйтăвĕсем çине хуравлать

**– 2011 çулхи юпа уйăхĕн 3-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Михаил Игнатьев «Çамрăк çемьесене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма патшалăх енчен пулăшмалли хушма мерăсем çинчен» Указне алă пуснă. Çак указ çинче тĕплĕнрех чарăнса тăрсамăр.**

– Çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвĕсене татса пама пулăшас тĕлĕшпе республикăра сахал мар ĕç пурнăçланать. Президент черетлĕ указа алă пусни çакна тепĕр хут çирĕплетет.

Çамрăк çемьесене çурт-йĕр çĕклеме пулăшакан программăсем республикăра ăнăçлă пурнăçа кĕреççĕ. Паянхи кун яллă вырăнта ĕçлесе пурăнакан сахал мар специалист çурт-йĕр çавăрма, хатĕр çурт е хваттер туянма пултарчĕ. Федерацин «Çурт-йĕр» программин «Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси» çум программи те ăнăçлă пурнăçланса пырать. Çапах та пурнăç асăннă программăсем анчах çителĕксĕррине кăтартса парать. Çавна май Президент çурт-йĕр çĕклессипе çыхăннă чăрмавсене татса пама Правительствăна çĕнĕрен те çĕнĕ майсем шырама хистет.

Асăннă указ пулăшнипе çурт-йĕр çĕклекен çамрăк çемьесем патшалăх тивĕçтерекен пулăшупа анлăрах усă курма пултараççĕ. Президентăн указĕпе килĕшӳллĕн, çурт-йĕр туянма е çĕклеме ипотека кредичĕ илекен çамрăк çемьесен процент ставкин пĕр пайне (4 процент) Чăваш Республикин бюджетĕнчен саплаштараççĕ. Пĕр çемье 10 çула 500–600 пин тенкĕлĕх ипотека кредичĕ илме пултарать.

**– Эконом класлă çурт-йĕр строительствин калăпăшне ӳстерес тĕлĕшпе мĕнле тĕллевсене палăртатăр?**

– Ку ыйту тавра сахал мар калаçатпăр пулсан та паян «эконом класлă çурт-йĕр» текен конкретлă ăнлав çук. Пирĕн тĕллев – граждансене рынок ыйтакан тĕрлĕ шайри тĕрлĕ планлă çурт-йĕрпе тивĕçтересси: пысăк хăтлăхлă çурт-йĕр, вăтам хаклă çурт-йĕр тата пысăках мар лаптăклă хваттерсем.

Паянхи кун çемьесем ытларах вăтам хаклă 28-30 тăваткал метрлă пĕр пулĕмлĕ хваттерсем туянасшăн.

**– Çурт-йĕр хута ярассипе ĕçсем мĕнле пыраççĕ?**

– Çурт-йĕр хăпартас ĕçре иртнĕ çулхипе танлаштарсан уйрăмлăх нумаях мар. Кăçалхи кăрлач–авăн уйăхĕсенче 470 пин тăваткал метр çурт хута янă. Пĕр çын пуçне çурт-йĕр хута ярассипе эпир Раççейĕпе тата Федерацин Атăлçи округĕпе илсен малта пыракан 5 регион шутĕнче. Çапах та пурнăç тунă ĕçсемпе лăпланса лармалла маррине çирĕплетет. Çывăх çулсенче çурт-йĕр хута ярассине 17–20 процент таран ӳстерме палăртатпăр.

**– Ипотека кредитне аталантарасси çинче те чарăнса тăрсамăр.**

– Çурт-йĕр ыйтăвĕ тĕрлĕ категоринчи граждансемшĕн çивĕч. Эпĕ ипотека кредичĕ çинче анчах мар, çурт-йĕр строительствипе çыхăннă пулăшу тĕсĕсем çинче те чарăнса тăрасшăн. Республикăра Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене тата вĕсен çемйисене çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе ĕçлекен программа ăнăçлă пурнăçа кĕрсе пырать. Черетре тăнă 4000 яхăн çынран паянхи кун тĕлне 3770 çынна яхăн çурт-йĕр туяннă. Питĕ пысăк пулăшу çакă. Сăмах май, кăçал Муркаш районне çак тĕллевпе 35 миллион тенкĕ ытла уйăрнă, кăрлач–авăн уйăхĕсенче 39 вăрçă ветеранĕ пурнăç условийĕсене лайăхлатнă.

Тăлăх ачасене çурт-йĕрпе тивĕçтерессi çине те пысăк тимлĕх уйăратпăр. Хальлĕхе учетра çакăн евĕр 1067 ача тăрать. Çывăх вăхăтрах 334 тăлăх ача пурăнмалли кĕтеслĕ пулĕ. Запасри çар çыннисене çурт-йĕрпе тивĕçтерессi те çивĕч ыйтусен шутĕнче. Ку тĕллевпе федераци бюджетĕнчен те укçа-тенкĕ уйăрчĕç. Тĕрлĕ категоринчи граждансене çурт-йĕр çĕклеме е туянма май паракан программăсем ăнăçлăн пурнăçланса пынине куратпăр. Çав вăхăтрах граждансен пысăк пайĕ хăйсен укçи-тенкипе е кредитсем пулăшнипе те çурт-йĕрлĕ пулать.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

Саламлатпăр



Юратнă мăшăра, аннене, тăхлачăна – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Альбина Веняминовна СМИРНОВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, телей сунатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, ĕçĕрсем яланах ăнса, ĕмĕтĕрсем пурнăçланса пыччăр. Кун-çулу такăр пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

Пĕрле савăнмалăх хавас пул ялан,  
Ĕçӳ ăнса пытăр, ан чактăр вăй сан.  
Сана хĕвел пăхтăр савса, юратса,  
Телей кăна пултăр хальхи пурнăçра.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, амăшĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем, мĕн пур тăванĕ.**



Савнă мăшăра, юратнă аннене, хаклă кукамая, ырă кăмăллă хунямана – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Валентина Григорьевна МАТВЕЕВĂНА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Эс пурри пирĕн пуянлăх, сан куллу пирĕншĕн телей. Эс утас кун-çулу такăр, ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп, пурнăçу тулăх пултăр.

**Салампа: мăшăрĕ, амăшĕ, икĕ хĕрĕ, икĕ кĕрӳшĕ, пилĕк мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**

Хаклă çыннăмăра – юратнă аннене, асаннене, кукамая, ват кукамая – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Людмила Порфирьевна ВЛАДИМИРОВĂНА** – 80 çулхи юбилейĕ ячĕпе чун-чĕререн тата пур кăмăлтан саламлатпăр. Тавах сана эсĕ пурришĕн, ырă кăмăлна, чун ăшшине пирĕншĕн шеллеменшĕн. Сывлăху санăн çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм килтĕр, ватлăх çулĕсене канлĕхре ирттерме Турри пулăшса пытăр. Нумаях пулмасть унăн ывăлĕ **ОЛЕГ**, хĕрĕ **КАЛЕРИЯ** хăйсен çуралнă кунĕсене паллă турĕç. Вĕсене те малашлăхра ырлăх-сывлăх кăна сунатпăр.

**Ачисем, кĕрĕвĕсем, мăнукĕсем, прамăнукĕсем, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, Муркашра пурăнакан **Зоя Николаевна КИРИЛЛОВĂНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн, мĕн пур ăшă туйăмпа саламлатпăр. Эсĕ пирĕншĕн чи хакли, тавах сана пуриншĕн те. Эсĕ пирĕншĕн пысăк савăнăç, телей, пуянлăх. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Яланах пулăшса йĕркелесе пынăшăн тав тăватпăр. Çирĕп сывлăх, çĕр çинчи мĕн пур ырлăха сунатпăр.

**Сана саламласа: çывăх çыннусем, юлташусем, ĕçри юлташусем, «Муркаш» фольклор ансамблĕн ушкăнĕ тата пĕтĕм тăванĕ.**

## Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн

**Ĕнер ЧР Президенчĕ М.В. Игнатьев ЧР Патшалăх Канашĕ тата республика халăхĕ ячĕпе «Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн» Çырупа тухрĕ.**

**Вăл республикăн мĕн пур ĕçченĕсене юлашки икĕ çулта экономикăна кризисран кăларассипе çине тăрса ĕçленĕшĕн тав турĕ. 2010 çулта экономика параметрĕсем пур енĕпе те çирĕппĕн ӳссе пынине палăртрĕ.**

**- Эпĕ 2011 çулта экономикăна кризисченхи шая кăларма задача лартрăм, - терĕ Президент, - цифрăсем пысăк пулин те эпир ăна пурнăçларăмăр. Пĕтĕмĕшле регион продукчĕн калăпăшне 199 млрд. тенке çитерме палăртрăмăр пулсан, чăннипе вăл 200 млрд. тенкĕрен кая мар пулать. Тĕп капитала инвестицисем хывасси - 55 млрд. тенкĕрен кая мар.**

**Республика ял хуçалăхĕшĕн çак çул уйрăмах тухăçлă пулчĕ. Ял хуçалăх производствин индексĕ 9 уйăхра 134,8 процентпа (Раççейĕпе – 115,9 процент) танлашрĕ.**

**Президент Çырура çынсен пурнăçне лайăхлатассипе малашне тата ытларах ĕçлеме кирлине палăртрĕ. Тĕп тĕллевсем – сывлăха сыхлас ĕç тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферисене çĕнетсе улăштарасси, вĕрентĕве, культурăна, строительствăна тата Чăваш Ен экономикине пĕтĕмĕшле çĕнĕлле аталантарасси, çапла майпа çынсен пурнăç шайне хăпартасси.**

**- Пире вăйлă Раççей кирлĕ. Пирĕн вăй – халăх пĕрлĕхĕнче. Раççей пĕрлĕхĕнче – пуласлăх, тăван Чăваш Ен тата унта пурăнакансен пуласлăхĕ, - терĕ Президент.**

Указ

## 3-мĕш ачашăн – 100 пин тенкĕ

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче Чăваш Ен Президенчĕ Михаил Игнатьев «Республикăри ача амăшĕн (çемье) капиталĕ çинчен» Указа алă пуснă. Патшалăхăн хушма пулăшăвĕ 100 пин тенкĕпе танлашать. 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса республикăри ача амăшĕн капиталĕн укçине виççĕмĕш ача çуратакан е усрава илекен ашшĕ-амăшĕ илме пултарĕ.

Халĕ çемьере иккĕмĕш е хыççăнхи ача çуралсан ача амăшĕн (çемье) капиталĕ шучĕпе федераллă бюджетран укçа уйăрса параççĕ. 2011 çулта унăн виçи 365698,4 тенкĕпе танлашать. Республикăри ача амăшĕн (çемье) капиталĕ вара – 100 пин тенкĕ. Нумай ачаллă телейлĕ çемьесене çур миллион тенкĕне яхăн патшалăх пулăшăвĕпе саламлама та юрать.

Палăртса хăвармалла. Çулсерен Чăваш Енре кун пек 2 пине яхăн ача çуралать. 2015 çул тĕлне вĕсен виçи 2,5–3,0 пине çитмелле. Ку пĕтĕм укçа-тенкĕпе е унăн пайĕпе çемьесем çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма, ачисене вĕрентме, кунпа пĕрлех хăйсен пенси шайне ӳстерме усă курма пултарĕç.

Республикăра

## Федераллă бюджетран – хушма пулăшусем

ЧР Финанс министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх, Раççей Федерацийĕн Правительствин 2011 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнчи 890 № йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен 2011 çулхи бюджечĕсен шайлашăвне тивĕçтерессин шучĕпе Чăваш Республикине 244,4 миллион тенкĕ дотаци уйăрса панă. Ку укçа-тенкĕне пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕрентӳ учрежденийĕсен педагогика ĕçченĕсен ĕç укçине кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса тата бюджет учрежденийĕсен ĕçченĕсен ĕç укçине октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ӳстернĕ май хушма тăкаксене саплаштарма уйăраççĕ.

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче вара республикăна федераллă бюджетран Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерме 423,7 миллион тенкĕ уйăрнă. 2011 çулта ку пулăшу сумми пĕтĕмпе 1414,5 миллион тенкĕпе танлашĕ. Çакă республикипе Аслă Отечественнăй вăрçăн 1500 ытла ветеранĕн пурнăç условийĕсене лайăхлатма май парĕ.

Пĕрлехи информаци кунĕ

## Çырупа паллашатпăр

Паян пĕтĕм республикăри пекех пирĕн районта та черетлĕ пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Республикăран килекен информаци ушкăнĕсем район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсемпе, РФ тата ЧР министерствисемпе ведомствисен территори подразделенийĕсен представителĕсемпе пĕрле ятарлă графикпа килĕшӳллĕн Ярославка, Муркаш, Уйкас Янасал, Чуманкасси, Ярапайкасси ял тăрăхĕсене çитсе кураççĕ, ялсенчи çынсемпе, предприятисемпе организацисен ĕç коллективĕсемпе тĕл пулаççĕ.

Пĕрлехи информаци кунĕн теми – Чăваш Республикин Президенчĕн М.В. Игнатьевăн Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнчи тĕп положенисене пурнăçласси çинчен.

# «Эпир малта пыракан пилĕк регион шутĕнче»

## Чăваш Республикин строительство министрĕ Александр ГОНЧАРОВ журналист ыйтăвĕсем çине хуравлать

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Паллах, ипотека кредичĕпе те анлăн усă кураççĕ. Унăн процент тӳлевĕн виçи экономикăри пĕтĕмĕшле лару-тăруран килет. Юлашки вăхăтра процент виçисем чакнине асăрхатпăр. Кризис вăхăтĕнче, вулакан астăвать пулсан, вĕсем палăрмаллах ӳснĕччĕ. Республикăра ипотека кредичĕпе усă курасси ӳссех пырать. Кăçал 3,5 миллиард тенкĕлĕх ипотека кредичĕ пама палăртнă пулсан, паянхи кун тĕлне 3 миллиард тенкине панă та ĕнтĕ.

Камсем усă кураççĕ-ха ипотека кредичĕпе? Ипотека кредитне палăртнă тапхăрта палăртнă суммăна тӳлесе татассине çирĕп туякан, паянхи тата ыранхи пурнăçа шанакан çемьесем илеççĕ. Çак тĕслĕх республикăри экономика лару-тăрăвĕ тăнăç пулнине кăтартса парать. Çав вăхăтрах асăннă кредитпа усă куракансен шучĕ ӳсни кризис тапхăрĕ иртни, ĕç укçин виçи ӳсни пирки хыпарлать. Çакă малашлăха шанчăклăн пăхма хистет.

**– «Çĕнĕ хула», «Финн айлăмĕ», «Богданка»... Асăннă проектсем ăнăçлă пурнăçланĕç тесе шанма пулать-и?**

– Çурт-йĕр строительствинчи чăрмавсем çинчен калаçма пуçласан эпир чи малтанах çак проектсене палăртатпăр: «Çĕнĕ хула», «Финн айлăмĕ», «Богданка». Вĕсенчен кашниййĕн хăйĕн историйĕ. Программăсене тивĕçлипе аталанма чарнă сăлтавсем çаксем – экономика кризисĕ, кредит ресурсĕсемпе çыхăннă чăрмавсем тата компани менеджменчĕсен йăнăшĕсем.

**«Çĕнĕ хула».** Çак проект çитес çулсенче пурнăçланасса шанас килет. Хальхи вăхăтра конкурссенче ку ĕçе малалла тăсакан строительство компанийĕсене палăртаççĕ. Çак çĕр лаптăкĕ республика харпăрлăхĕнче юлнине, ку микрорайонта хута янă инженери инфратытăмĕ республикăн тата Шупашкар хулин харпăрлăхĕсенче пулнине те асăнмалла. Пысăк яваплăха хăйсем çине илес текенсем пурри, проект республика тулашĕнчи инвесторсене те илĕртни туйăнать, мĕншĕн тесен кунта строительство ĕçĕсене пурнăçлама питĕ меллĕ вырăн.

**«Финн айлăмĕ».** Ку проект Шупашкарăн, проекта хутшăннă граждансен чун ыратăвĕ. Çапах та проект ура çине çĕнĕрен тăма пуçларĕ. Пĕр çурт хута кайнă, хальхи вăхăтра тата икĕ çурт хăпартаççĕ.

2011 çулхи çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче Федерацин «Тытăнса тăраймалăх (панкрутлăх) çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕ вăя кĕчĕ. Вăл строительство пайне кĕнĕ участниксемшĕн уйрăм йĕрке палăртать. Арбитраж сучĕ çак проектпа çыхăннă ыйтусене пăхса тухĕ тата татса парĕ.

**«Богданка».** Хула аталанăвне пысăк витĕм кӳрекен тепĕр проект. Патшалăх контракчĕсемпе килĕшӳллĕн паян кунта инженери инфраструктурин объекчĕсен строительстви вĕçленет. Çĕнĕ çуртсем çĕкленеççĕ, ыттисене çĕклеме те лаптăксене хатĕрлеççĕ. Харпăрлăхăçă подряд организацийĕсене палăртассипе ĕçлет.

**– Шупашкарта Сити курăнăр-и?**

– Шупашкарсем хăйсен хули пирки сăмах пынă чух ăна Атăлçи тăрăхĕнчи чи хитре хула теççĕ. Кирлĕ-ши пире Сити (пуян банксемпе компанисем вырнаçнă район)? Тавлашуллă ыйту çакă.

**– Çул-йĕр тăвас ĕçри çивĕч ыйтусем çинче чарăнса тăрас пулсан...**

– Республикăра инфратытăма аталантарас тĕллевпе çулсеренех сахал мар ĕç пурнăçлатпăр. Яка та тикĕс çул-йĕр – инфратытăмăн пĕр пайĕ. Лайăх çулсем экономика аталанăвне пысăк витĕм кӳреççĕ.

Республика территорийĕнчи тĕп çул-йĕре юсассипе 2006 çултанпах ăнăçлă ĕçлетпĕр. Çул-йĕр тытăмне аталантарассипе çыхăннă программăна 2025 çулччен йышăннă.

Ку енĕпе сахал мар ĕç пурнăçланă, республика пĕлтерĕшлĕ сахал мар çул-йĕр хута яратпăр, тĕпрен юсатпăр. Тĕслĕх вырăнне сирĕн районти «Волга» – Мулкачкасси – Оринин автоçула тума пуçăннине, çак ĕç малалла пынине палăртас килет. Унăн смета хакĕ 19176,46 пин тенкĕ.

Юхан шывсем çине кĕперсем хывассипе те тимлетпĕр. Паянхи кун чи пĕлтерĕшлĕ ĕç – Сăр шывĕ урлă кĕпер хывасси.

**– Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама пулăшакан фондăн малашнехи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен мĕнле-ши?**

– Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама пулăшакан фондăн малашнехи ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă ыйтăва татса парассине Раççей Правительствинче тавлашу пырать. Çак фонд пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх сферине ырă витĕм кӳнине палăртмалла. Анчах та федерали шайĕнче асăннă фондăн ĕçĕ-хĕлĕн срокне чакарасси пирки саккун йышăннă. Хальхи вăхăтра фондăн ĕçлев срокне тăсас, çавна май программăна пурнăçлама каякан тăкаксене саплаштарма бюджетран укçатенкĕ уйăрас ыйтусене пăхса тухаççĕ.

**– Çул-йĕр фончĕ çинче те чарăнса тăрсамăр.**

– Республика шайĕнчи çул-йĕр фончĕ йĕркеленет. Шел пулин те, паян туянакан автомашинăсене пирĕн çул-йĕр валли кăлармаиннине асăрхатпăр. Тĕнче шайĕнчи пысăк пахалăхлă çул-йĕр тăвассипе пирĕн чылай ĕçлемелле-ха. Çул-йĕр фончĕ йĕркелени çак ыйтăва татса парасса шанас килет. Фонда укçа-тенкĕпе тивĕçтерекен çăл куçсем пур – акцизсем (пулăшу ĕçĕсене хаклатни), налуксем тата ытти те. Прогноз тăрăх çул-йĕр валли 2012 çулта кăçалхинчен 600 миллион тенкĕ ытларах уйăрмалла. Лару-тăру ырă енне улшăнасса шанма май пур.

# Электронлă çĕнĕ справочник пулĕ




Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Правительствисен «Электронлă Правительство» туса хурассипе, çĕнĕ информаци технологийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса çынсен кулленхи пурнăç условийĕсене лайăхлатассипе бюджет организацийĕсем умне пысăк задачăсем лартаççĕ. Республикăра бюджет организацийĕсем хушшинче электронлă документ çаврăнăшне йĕркеленĕ. Электронлă муниципаллă услугăсем парассине йĕркелессипе ĕçсем пыраççĕ. Нумай предприятисемпе организацисем асăннă системăпа анлăн усă кураççĕ, хăйсен электронлă почта ещĕкĕсене тата сайчĕсене усаççĕ.

Пур ĕçсене те кирлĕ пек туса пыма пире хальхи вăхăтра электронлă адрессемпе Web-сайтсен корректлă та актуаллă справочникĕ кирлĕ. Ку вăл кирлĕ информацие çийĕнчех илме е пĕлтерме май парать. Çав тĕллевпе 2009 çулта районăн телефон справочникне кăларнă чухне унта предприятисемпе организацисен электронлă адресĕсемпе Web-сайчĕсене те кĕртнĕ. Кун пек справочникех район администрацийĕн официаллă сайчĕ çинче те пур (www.morgau.cap.ru).

Анчах та даннăйсем кунсерен тата сехетсерен тенĕ пекех улшăнса тăраççĕ. Çавăнпа та пĕрлехи вăйпа предприятисемпе организацисен, харпăр хăйсен предприятийĕсен электронлă адресĕсемпе Web-сайчĕсен адресĕн Онлайн электронлă справочникне йĕркелес ыйту тухса тăчĕ. Йĕркелӳ ыйтăвĕсене татса парассине район администрацийĕн информацие тивĕçтерекен пайĕ хăйĕн çине илет. Справочник тулли тытăмлă тата унти информаци тĕрĕс пуласси предприятисемпе организацисен ертӳçисенчен килет. Ку вăл пур организацисене те, вăл шутра федераллă структурăсене те пырса тивет. Çывăх вăхăтрах сире info@morgau.cap.ru электронлă адрес çине аялрах илсе кăтартакан формăпа хăвăрăн предприяти пирки информаци ярса пама ыйтатпăр.

| Точный почтовый адрес | Полное наименование организации | ФИО руководителя | Вид деятельности | Электронный адрес | Адрес Web-сайта в Интернете | Контактные телефоны (руководителя, приемной) |
| --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- |
| | | | | | | |
| | | | | | | |
| | | | | | | |

Справочник Интернет сечĕпе усă куракансемшĕн пурин валли те уçă пулĕ. Вăл район администрацийĕн www.morgau.cap.ru официаллă сайчĕ çинче пулĕ. Сирĕн сĕнӳсене кура унти даннăйсене çĕнетсе тăрăпăр. Ыйтса пĕлмелли телефон: 62-8-96.

**В. ЛАВРЕНТЬЕВ,**
**район администрацийĕн информацие тивĕçтерекен пайĕн пуçлăхĕ.**

## Официально

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**15 ноября 2011 года № 32/1**

**О заявлениях членов участковых избирательных комиссий с правом решающего голоса избирательных участков №№ 527, 528, 542, 543, 565, 566, 567 по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации шестого созыва**

В соответствии со статьями 6,11 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» и на основании заявлений члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 527 с правом решающего голоса Тихонова Николая Геннадьевича, члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 528 с правом решающего голоса Петрова Николая Ильича, члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 542 с правом решающего голоса Егоровой Зинаиды Ивановны, члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 542 с правом решающего голоса Дмитриенко Луизы Петровны, члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 543 с правом решающего голоса Егорова Алексея Зиновьевича, члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 565 с правом решающего голоса Маряшкиной Сильвии Николаевны, члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 566 с правом решающего голоса Маряшкиной Индиры Николаевны, члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 567 с правом решающего голоса Сапожникова Григория Григорьевича Моргаушская территориальная избирательная комиссия **р е ш и л а:**

1. Освободить:

а) Тихонова Николая Геннадьевича от обязанностей члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 527 с правом решающего голоса до истечения срока полномочий;

б) Петрова Николая Ильича от обязанностей члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 528 с правом решающего голоса до истечения срока полномочий;

в) Егорову Зинаиду Ивановну от обязанностей члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 542 с правом решающего голоса до истечения срока полномочий;

г) Дмитриенко Луизу Петровну от обязанностей члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 542 с правом решающего голоса до истечения срока полномочий;

д) Егорова Алексея Зиновьевича от обязанностей члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 543 с правом решающего голоса до истечения срока полномочий;

е) Маряшкину Сильвию Николаевну от обязанностей члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 565 с правом решающего голоса до истечения срока полномочий;

ж) Маряшкину Индиру Николаевну от обязанностей члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 566 с правом решающего голоса до истечения срока полномочий;

з) Сапожникова Григория Григорьевича от обязанностей члена участковой избирательной комиссии избирательного участка № 567 с правом решающего голоса до истечения срока полномочий.

2. Предложить политическим партиям, иным общественным объединениям, представительным органам муниципальных образований, собраниям избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы в срок 20 ноября 2011 года представить в Моргаушскую территориальную избирательную комиссию предложения по кандидатурам в состав участковых избирательных комиссий №№ 527, 528, 542, 543, 565, 566, 567 по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации шестого созыва.

3. Направить настоящее решение для опубликования в средства массовой информации.

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии Л.Ю. ТАРАСОВА.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. ФОМИНА.**

## Ĕмĕр иртет – ырă ят юлать

# Пурнăçне выльăх тухтăрĕн ĕçĕпе çыхăнтарнă



Николай Никонорович Дмитриев тесен кам пĕлмест пуль ăна Оринин тăрăхĕнче. Пултаруллă выльăх тухтăрĕ кăçалхи чӳк уйăхĕн 11-мĕш кунĕнче 70 çул тултарчĕ. Вăл 1941 çулта Муркаш районĕнчи Турхан ялĕнче çуралнă.

Пурнăçра тулли телейлĕ пулма пысăк пĕлтерĕшлĕ икĕ япала кирлĕ теççĕ – пĕри çемье, тепри чуна килĕшекен профессси суйласа илме пĕлни. Турă тивлет панă пулĕ пирĕн çывăх та хаклă çыннăмăра: çемье ырлăхĕпе улталанман, профессии илессипе те йăнăшман.

1967 çулта вăл Вăрнарти ветеринари совхоз-техникумне вĕренме кĕрет. 1970 çулта пуш уйăхĕн 4-мĕш кунĕнче юлашки экзамен ăнăçлă тытнă хыççăн Турхан ялне таврăнать. Алла диплом илнĕ ятарлă вăтам пĕлӳллĕ специалист ĕçе вырнаçас тĕллевпе пĕр тăхтамасăр районти выльăх-чĕрлĕх чирĕпе кĕрешекен станцине çитет. Кунта ăна пултаруллă ертӳçĕ Михаил Алексеевич Миронов кĕтсе илет, çамрăк специалист ун кăмăлне каять. Çапла вара ăна Оринин ветучастокĕнче выльăх тухтăрĕ пулса ĕçлеме направлени параççĕ. Пуçĕлех кӳлĕнет Николай Никонорович хăй кăмăллакан ĕçе.

Районти выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станци пуçлăхĕ М.А. Миронов ĕçе пĕлсе йĕркелесе пынипе Николай Никоноровичăн ĕçĕ те ăнăçлă тăсăлнă. Вăл тăрăшнипе, çине тăнипе Оринин ветучастокĕн çĕнĕ çуртне çĕклеме пултарнă. Çакă йăлтах ĕнер пулнă пекех, анчах хыçра 70 çул – вĕсенчен 32 çулĕ Оринин ветучастокĕн ертӳçи – выльăх тухтăрĕ. Вăл кирек хăçан та хăй ĕçне пĕлсе, юратса пурнăçланă. Ку тăрăхрисем те унăн ĕçĕпе яланах питĕ кăмăллă. Кулленхи ĕç ăнса пынă чух çемье çирĕп пулнинчен нумай килет. Николай Никоноровичпа Галина Николаевна 40 çула яхăн килĕштерсе пурăнаççĕ. Ял тăрăхĕнчи халăхшăн вĕсем – ырă тĕслĕх. Ачисем пурте – Надежда, Владимир, Александр – хăйсен юратнă ĕçĕсенче вăй хураççĕ. Надежда ашшĕн çулĕпе кайнă, Хусанти ветеринари институтĕнче аслă пĕлӳ илнĕ, ывăлĕ Владимир шофер пулса ĕçлет. Ĕçчен те пултаруллă çемьепе епле мухтанас мар.

Хисеплĕ те ырă чунчĕреллĕ çыннăмăра, маттур та малкурăмлă выльăх тухтăрне, тăвана, хăйматлăх аттене, кӳршĕне – Николай Никонорович Дмитриева 70 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр.

Вăрăм ĕмĕр пултăр санăн пурнăçра, савнă мăшăру куллен пултăр сан çумра. Ачусем куллен хисеплĕн пăхчăр сан çине. Мăнуксем ялан пулччăр санăн çумăнта. Паян çемье праçникĕ – санăн юбилей. Эпир ыр сунатпăр, тав тăватпăр – ан чирле.

**Сире хисеплесе Оринин ялĕнчи ветерансен Канашĕн председателĕ, тăванĕсем, хăйматлăх ывăлĕпе хĕрĕ, кӳршисем, кил-йыш.**

## Йыхрав

# Пĕлтерĕшлĕ ыйтусем тавра

**Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2011 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕнчи 13 № йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ вунпĕрмĕш ларăвне 2011 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче 10 сехетре пухма йышăннă.**

Кун йĕркине пăхса тухма депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2007 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнчи 21/6 № йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ «Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан з а к о н о д а т е л ь с т в и п е килĕшӳллĕн вырăнти самоуправлени органĕсене шаннă налук йĕркелĕвĕн ыйтăвĕсем çинчен» положение улшăнусем кĕртесси çинчен, муниципаллă услугăсем пама кирлĕ тата обязательнăй шутланакан услугăсемшĕн тӳлев виçине палăртмаллин методики çинчен, Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăх хатĕрне тӳлевсĕр майпа Муркаш ял тăрăхĕн харпăрлăхне парасси çинчен, Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕн реестрне учета илессин тата туса пырассин йĕркин положенийĕ çинчен, Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăх хатĕрне Чăваш Республикин харпăрлăхне парасси çинчен, пурлăха Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхне илесси çинчен, 2012 çул валли Муркаш район администрацийĕ валли уйăракан çĕр участокĕсене уйăрассин программине çирĕплетесси çинчен, Муркаш район администрацийĕн структурине улшăнусем кĕртесси çинчен, Муркаш район администрацийĕн муниципаллă служащийĕсен квалификаци экзаменне иртермелли положение çирĕплетесси çинчен ыйтусене кĕртнĕ.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне район администрацийĕн структура подразделенийĕсен ертӳçисене, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи çамрăксен парламенчĕн членĕсене чĕнеççĕ.

**Хамăр инф.**

«РОСГОССТРАХ» 90 çул тултарнă ятпа

# В. ВЯЗОВ: «Тилхепене пушатма шухăш çук»

***Пурăнан пурнăç инкек-синкексĕр пулмасть. Хуйхă-суйхă килсе çапсан çеç «ма тӳшек сармарăм-ши» тесе пăшăрханни те кая юлнă утăм пулнине кашниех ăнланатпăр. Çакнашкал лару-тăрура çăмăллăх шыракансем, ыранхи кунпа пурăнакансем маларахах «РОСГОССТРАХ» страхлакан компани алăкне уçни, пулас инкек-синкекрен страхланни паян никамшăн та вăрттăнлăх мар. Страховани рынокĕнче вуншар çул пĕр кăлтăксăр ĕçлекен организаци хăйĕн тĕллевĕсемпе тата пулăшу мелĕсемпе кашни çемьере, нумай çын чунĕнче ăшă йĕр хăварма ĕлкĕрнĕ. Пĕчĕк çулăмран пысăк кăвайт вăй илет. Çапла вара «РОСГОССТРАХăн» пулăшу ăшшине туйнă çынсемпе предприяти-организацисем страхланас ыйтупа куллен майлах кунта васкаççĕ. Страхлакан компани хăйсен шанăçне тӳрре кăларасса, ăна кура ыранхи куна шанчăклăрах пăхма май туса парасса вĕсем ăнланаççĕ-шанаççĕ. Мĕнле кĕтсе илчĕ-ха хăйĕн 90 çулне асăннă страхлакан компани? Мĕн çĕннине шантарать вăл ыранхи пурнăçра? Страхлас ĕçре малашлăх утăмĕсене мĕнре курать? Çак ыйтусем çине хурав шыраса район хаçачĕн сотрудникĕ «РОСГОССТРАХ» компанин Муркашри страхлакан пай пуçлăхĕпе В. ВЯЗОВПА тĕл пулса уçă калаçу ирттернĕ.***

**– Валерий Иванович, страхлакан компанисен пысăк рынокĕнче «РОСГОССТРАХ» Муркаш районĕнче мĕнпе палăрса тăрать? Унăн ĕçне эпир паян епле хаклама пултаратпăр?**

– Тĕрĕсех палăртрăр, страхлакан компанисен рынокĕ паян туллиех. Çакăн çине манăн паян ял çыннин куçĕпе пăхас килет. «Хăшне шанмалла?» – шухăшлать вăл. Çак ыйту çине хурав шыранă май вĕсем ытларах чух пирĕн алăкран шакканине ял çынни хальлĕхе «РОСГОССТРАХ» страхлакан компанийĕ шанни пирки калать. Ку вăрă пире те пурнăç утăмĕнчен юлмасăр пыма, страхлас ĕçре çĕнĕ технологисене тăтăш алла илсе ĕçлеме ыйтать. Вуншар çулхи пуян ĕç опычĕпе эпир çакна туллин пурнăçлама хатĕр.

Паянхи куна пирĕн страхлакан пайра пысăк квалификациллĕ 57 специалист тата халăхпа ĕçлеме професси енчен вĕрентсе хатĕрленĕ 49 страхлакан агент вăй хурать. Çакнашкал вăй пире çынсем патне çывăхарах пулма, хамăр клиентсен ыйтăвĕсене – вĕсем хăш ялта пурăннине пăхмасăрах – туллинрех татса пама çул уçать. Страхлакан компанин тĕп шăнăрĕ пирĕн ăсталăхпа пĕрлех хамăра шанакан клиент та пулнине эпир курса тăратпăр. Клиент хăйне валли страхланас тата страховани укçи-тенки илес енпе пĕтĕм ĕçе уçăмлă йĕркелениие курать пулсан, вăл айккала каймасть. Шанчăклăха кура кӳршине те, юлташне те пирĕн патăмăра илсе пырать, «РОСГОССТРАХ» страхлакан компани пулăшăвĕпе усă курма сĕнет. Пирĕн шанчăклă сервис кашни клиента çăмăллăх панине куратпăр. Çавăнпах пулĕ «РОСГОССТРАХ» юлашки çулсенче шанчăклăхăн чи пысăк рейтингне тытса пырать. Ку вара компанин тăнăçлăхне тата финанс лару-тăрăвĕ шанчăклине çирĕплетет.

**– Районта пурăнакансем мĕн страхлассине паян малти вырăна хураççĕ?**

– Пĕрремĕш-иккĕмĕш тесе шутласа кайсан хисеп вăрăма тăсăлать. Çапах та сирĕн ыйтăвăр çине хуравласа халăх ытларах мĕн страхланине каласа хăварам. Пурнăç, сывлăх, автомобильсем, тĕрлĕрен оборудовани, таварпа материал пурлăхĕ, выльăх-чĕрлĕх, килти ытти чĕр чунсем, çул çӳреве кайни, гражданла яваплăх, кредитсемпе салуксем т. ыт. те. Пирĕн районта çынсен пурлăхне страхласси унчченхиллех малти вырăнта. Кунта эпир çурт-йĕре, хваттерсене, килти пурлăха страхлассине те тĕп вырăнта тытса пыратпăр. ОСАГО страховани тĕсне илес пулсан, ку енпе районти пирĕн тӳпе 56 процента яхăн. Мĕн çинчен калать-ха çакă? Пирĕн компанин шанчăклăхĕ пурри пирки!

**– «РОСГОССТРАХ» пирĕн çĕр-шыври страховани рынокĕнче хăйне евĕр лидер шутланать. Унăн масштабĕ, клиентсен бази, взноссем пуçтарни тата укçа-тенкĕне вăхăтра тӳлени çакна çирĕплетеççĕ. Çакăнта юлашки кăтартусемпе паллашни те ытлашши пулас çук.**

– Пирĕн компани услугисемпе çĕр-шывра пĕтĕмпе 45 миллион ытла çын (Муркаш районĕпе 17,5 пин клиент), Раççей экономикин 240 пин ытла предприятийĕ усă курать. Кăçалхи пĕрремĕш çур çулти взноссен пуххи çĕр-шывĕпе 46,4 миллиард тенкĕпе танлашнă пулсан (пĕлтĕрхипе танлаштарсан 120 процент), Муркаш уйрăмĕпе 22,5 млн. тенкĕ (115 процент).

**– Çĕнĕ саккун акчĕсенче уйрăмах хăрушă объектсене страхласси пирки калани пур. Çакă страховани рынокне аталантарма пулăшĕ-ши?**

– Уйрăмах хăрушă объектсене обязательнăй йĕркепе страхласси 2012 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрет. Кулленхи ĕçпе пăхсан уйрăмах хăрушă объектсен хуçисем вĕсене ку таранччен ирĕклĕ майпа ячĕшĕн кăна страхланăччĕ. Малашне вĕсен обязательнăй йĕркепе страхланма тивет. Эпир хамăр енчен çак ĕçе пурнăçлама хатĕр.

**– Сирĕн агентсенчен илтнĕ тепĕр çĕнĕлĕх те кăсăклантарать. «РОСГОССТРАХăн» патшалăхăн мар пенси фончĕ пур тени тĕрĕс-и?**

– Нумаях пулмасть «РОСГОССТРАХ» компанийĕсен ушкăнне патшалăхăн мар пенси фончĕ кĕчĕ – НПФ «РГС». Нумай çын ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне унта куçарма ĕлкĕрчĕ те ĕнтĕ. Районта пурăнакансен те çак çула суйлас тесен хăйсен тăрăхĕнчи страхлакан агентпа çыхăнмалла кăна.

**– Хаçат редакцине час-часах пурнăçра совет саманинче страхланипе тунă килĕшӳсем пирки ыйтусемпе тухаççĕ. Вĕсен шăпи мĕнлерех пулĕ?**

– Вунă çул ĕнтĕ «РОСГОССТРАХ» хăй умĕнчи социаллă функцие туллин пурнăçласа пырать. Кунта сăмах шăпах эсир хускатнă ыйту пирки пынине палăртассăм килет. 1992 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕччен харпăр хăйне страхлассипе тунă килĕшӳсемшĕн гражданасене компенсаци тӳлессипаян та чарăнса ларман. Йышăннă заявленисем тăрăх 2001 çулхи çурла уйăхĕнчен пуçласа 2011 çулхи çурла уйăхĕччен 14 миллион гражданина компенсацисене пĕтĕмпе 11,6 миллиард тенкĕ тӳленĕ.

**– Страхлакан рынокри конкуренци «хисеплĕ» ўсĕм те, малти вырăнта пыни те лăпланмалли сăлтав пулманни пирки систерет.**

– Эпир çакна ăнланатпăр. «РОСГОССТРАХ» страхлакан компанин тĕп принципĕ – çĕнĕлĕхсенчен юлмасăр тăтăш аталанмалла. Хăвăрт улшăнса пыракан пурнăçра кун йĕркипе тан пыни çеç çителĕксĕррине, пĕр утăм маларах пымаллине ăнланса ĕçлетпĕр. Пирĕн тĕп тĕллев – страхланакан çынсене финанс услугисен ытларах парасси. Пирĕнпе шанчăклă ĕçлекен клиентсем классикăллă страхованисĕр пуçне НПФ «РГС» услугисемпе те анлăн усă курасса шанатпăр тата кĕтетпĕр. Хăй пурнăçĕшĕн ответлăха туякана, ыранхи куна шанчăклă пăхакана, çемьен финанс лару-тăрăвĕ çине тимлĕх уйăракана эпир хапăл тусах йышăнатпăр. Пире суйласа вăл йăнăшмĕ!

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Юбилей

## Ертӳçĕ мĕнле – коллектив та çапла

«Путене» ача садне 2005 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнчен Изабелла Владимировна Ферапонтова ертсе пырать. Кунта ачасене килĕштĕр, вĕсене аталанма майсем çителĕклĕ пулччăр тесе хастар ертӳçĕ нумай тăрăшать. «Путене» вăхăтпа тан пытăр тесе вара Изабелла Владимировна хăйĕн ăсталăхне ӳстерессипе те тимлет. Акă пĕлтĕр кăна-ха Санкт-Петербург хулинче иртнĕ курссенче вĕренсе ертӳçĕ должноçĕн аслă категорине çирĕплетсе пачĕ. Сочи хулинче иртнĕ учительсен слетне хутшăнса унта паллашнă çĕнĕлĕхсене Муркаша илсе çитерчĕ кăна мар, вĕсемпе «Путенере» паян усă кураççĕ.



Изабелла Владимировна вара кашнинпех пĕр чĕлхе тупма пĕлет.

Аслисем тăрăшнипе «Путенене» çӳрекенсем чылай конкурса хутшăнаççĕ. Кунсăр пуçне воспитательсене тĕрлĕ конкурссене хутшăнма явăçтарассипе тăрăшать ертӳçĕ. Ача сачĕ пĕтĕмĕшле хăй те конкурссене сахал мар хутшăнса республикăра малти вырăнсене йышăнать. Акă республикăри «Светофорик» конкурсра çĕнтерӳçĕ пулнипе, «Путенери» шкул çулне çитмен ачасем проект хӳтĕленипе призлă вырăнсем çĕнсе илнипе ертӳçĕн тӳпи пĕчĕк мар. 50 ытла çынран тăракан коллектива ертсе пыма пысăк ăсталăх кирлĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕн грантне те «Путене» çĕнсе илни ăнсăртран мар. Ертӳçĕ мĕнле – коллектив та çаплах пулма тăрăшать: хастар, мал туртăмлă, çĕнĕлĕхсене йышăнса пурнăçа кĕртет. Пĕтĕм Раççейри «Ача сачĕсем – ачасене» регион шайĕнчи конкурсра «Чи лайăх ача сачĕ» пулса тăчĕ.

Ĕмĕтсем Изабелла Владимировнăн татах та пысăкрах, шухăшсем те анлă. Вĕсем пурнăçланччăр тесе ертӳçĕ куллен тăрăшать, коллектива та хавхалантарса пырать. Ыран вăл хăйĕн юбилейне паллă тăвать. Çуралнă кунпа саламласа эпир ăна çирĕп сывлăх, ăнăçу, вăй-хăват сунатпăр.

**«Путене» ача сачĕн коллективĕ.**

Ыйту – хурав

## Пурăнмалли ирĕк кирлĕ

***Унчченхи вăхăтра ют çĕр-шыв гражданĕсем Раççей Федерацийĕнче вăхăтлăх пурăнма ирĕк илмесĕрех Раççей гражданствине илме пултарнă. Халĕ çак йĕрке улшăннă теççĕ. Тĕрĕсех-и?***

**А. СОКОЛОВ.** Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ.

***Вулакан ыйтăвĕпе эпир РФ федераллă миграци службин Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн пуçлăхне Л. ПЛЕЧОВАНА паллаштартăмăр. Любовь Геннадьевна хуравĕ çапла пулчĕ:***

– Раççей Президенчĕ Д. Медведев кăçалхи юпа уйăхĕн 19-мĕшĕнчи указĕпе Казахстан, Кăркăзстан, Беларуç Республикисенчен Раççее çĕр-шывсем хушшинчи çăмăллатнă йĕркепе куçса килекен мигрантсене Раççей Федерацийĕн гражданствине илес ыйтăва пăхса тухнă чух Раççейре пурăнмалли ирĕк пурри ыйтма хушнă. Çак документ пулмасан ыйтăва килĕшӳллĕ татса пама май килмĕ.

# Ĕçĕпе ырă ята тивĕçнĕ

Вăрçă ачисем



Пурнăç. Камăн мĕнле килет ĕнтĕ вăл. Ахальтен каламан ĕмĕр сакки сарлака тесе. Пĕри нуша мĕнне те пĕлмест тата тар юхтарса ĕçлесе те курмасть пулсан, тепри кашни утăмри ĕçне çичĕ хут тăр каларса пурнăçлать. Уйрăмах паянхи пурнăçра çакна кашни утăмрах курма пулать. Хăшĕсем – халăхра калашле – сăмсине те шăлма вĕренсе çитеймен-ха, анчах ют патшалăхра туса кăларнă çăмăл автомашинăсен рулĕ умĕнче каçăрăлса ларса тусан вĕçтерсе çӳреççĕ. Ĕç ĕмĕрĕпе пылчăкра çăрăлаканни вара автомашина мар, велосипед туянмалăх та укçатенкĕ çитерейместь...

Еплерех йывăр пулнă пулĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче фронтра та, тылра та тар тăкнă, юн юхтарнă мир салтакне! Юхăннă çĕр-шыва вăрçă хыççăн ура çине тăратакансене çăмăл килнĕ-ши тата? Уйрăмах ашшĕсĕр юлнă ачасен пурнăçĕ çăмăл пулман. Паян вара эпир час-часах вĕсене пĕлсех те каймастпăр. Тĕрĕссипе вĕсем хăй вăхăтĕнче пирĕн паянхи пурнăçшăн, çĕр-шыв ирĕклĕхĕпе пуянлăхĕшĕн ырми-канми вăй хунă. Хăйсем чылай чухне йĕркеллĕ пурăнса та курайман. Çакна асилсен паян тарăн шухăша путатăп.

Нумаях пулмасть Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Лап Олкашра пурăнакан Лидия Петровна Лаптева хăйĕн 70 çулхи юбилейне паллă турĕ. Çак паллă кун вăл хăйĕн тăванĕсемпе, кӳршĕ-аршăпа тулли кĕреке хушшинче хурланчĕ те пуль, савăнчĕ те пуль. Çапла калама унăн пурнăç çулне тишкерни çирĕплетет.

Лидия Петровна çак ялтах ашшĕне фронта илсе кайсан 1941 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче çуралнă. 1943 çулта вăрçă хирĕнче çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн пуçне хунă ашшĕне – питĕ шел – вăл пачах та курайман. Пĕчĕк хĕр ачан вара ачаранах йывăр пурнăç тутине тутанма тивнĕ. Сысна ферминче ĕçленĕ амăшне вăл пуçламăш классенче вĕреннĕ чухнех уроксем хыççăн пулăшма çӳренĕ. Кунпа пĕрлех килти ĕçрен те хĕр пĕрчи нихăçан та пăрăнман.

Шкула та – ĕçе, ĕçе те – шкула. Йывăр пурнăçра ĕç маларах вырăн йышăнать. Çапла вара шкултан вĕренсе тухсанах Лида пĕрлешӳллĕ хуçалăх ферминче ĕçлеме тытăнать. Лайăх ĕçĕпе вăл 17 çултах «Чи лайăх сысна пăхакан» хака тивĕçсе Хисеп грамоти илет. Çакă унăн хавхаланăвне çĕклет кăна. Лида хăй суйласа илнĕ ĕçе юратса, чунне парса туса пырать. Фермăра кун кунланă май ăна выльăх тухтăрĕн ĕçĕ кăмăла кайма пуçлать, выльăх сиплекен пулас ĕмĕт çуралать.

1961 çулта ун чухнехи «Гвардеец» колхоз ертӳçисем хĕрĕн вĕренес кăмăлне курса ăна Патăрьелĕнчи ветеринарсен курсне вĕренме яраççĕ. Юратнă профессие алла илес тесе самаях тăрăшать хĕр, вĕренӳре хăйне ырă енчен çеç кăтартать.

Тивĕçлĕ пĕлӳ илнĕ хĕр кĕçех ветеринари фельдшерĕ пулса тăван колхоза таврăнать. Пĕлӳ çулĕ çине тăнă Лида курссенче вĕреннипе çеç çырлахмасть. Ĕçленĕ хушăрах куçăмсăр майпа вĕренсе вăтам пĕлӳллĕ специалист пулма Вăрнарти ял хуçалăх техникумне вĕренме кĕрет. 1970 çулта унтан ăнăçлă вĕренсе тухса диплом илсен ĕçрен хăраман Лидия Петровна ял хуçалăхĕн чăн-чăн специалисчĕ пулса тăрать. Тинех пурнăç йĕркеленнĕ пек туйăнчĕ Лидăн: мăшăр тупăнчĕ, качча кайрĕ, ывăл çуратрĕ. Савăнса пурăнмалла темелле, анчах мăшăрĕпе пурнăç ăнмасть, пĕртен-пĕр ывăлĕ те сарăмсăр çĕре кĕрет. Темĕнле хуйхă пулсан та этем тенин пурăнмаллах. Хăй ăсĕпе тата тăрăшулăхĕпе пурнăç çулне уçса пыракан хĕрарăм районти ветеринари лабораторине лаборантка пулса ĕçлеме вырнаçать. Хуйхăна ĕçре пусарма тăрăшса шанса панă ĕçе юратса та тӳрĕ кăмăлпа туса пырать. 1978 çулччен тимлет вăл çак ĕçре. Çак вăхăтран тăрăшуллă специалиста Мăн Сĕнтĕрти ветлечебницăна ĕçлеме куçараççĕ. Тивĕçлĕ канăва тухиччен çак коллективра вăй хурать вăл. Тăрăшуллă ĕçĕпе «Ĕç ветеранĕ» медале тивĕçет.

Лидия Петровна ĕçленĕ иртнĕ кунсене çаврăнса пăхатăн та ветеринари фельдшерĕн пĕтĕм йывăрлăхĕ куç умне тухать. Çывăхри хуçалăхсене çитсе обществăлла выльăх-чĕрлĕхе сыватас тата тĕрлĕ чирсенчен профилактика ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлассисĕр пуçне ялти выльăхсем те пур-çке. Ял çыннине пулăшассине вăл нихăçан та иккĕмĕш вырăна хăварманнишĕн паян та Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕ ăна ырăпа аса илет.

Сахал пулнă-и-ха çĕрлехи вăхăтра ял çыннисен килти чирлĕ выльăхĕсене пулăшма тухса чупни? Ĕне пăрулаймасть-и е пăруланă хыççăн йывăрлăха кĕрсе ӳкет – никам та Лида аппан пулăшăвĕсĕр юлман.

Ял халăхĕн те, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче те ĕне кăна пулман вĕт-ха. Сысна фермисене, сурăхсем тăракан сарайсене те, чăх-чĕп витисене те Лидия Петровна пĕр кĕттермесĕр кайса çӳренĕ. Вăхăтра пулăшу панă. Урамра çуллахи шăрăх кун-и, хĕллехи шартлама сивĕсем-и, витерен тăкнă пек çумăр çăвать-и, хура кĕркуннехи вĕр тĕттĕм каçсемлĕ пылчăклă урам-и, çурçĕр çилĕ састарса вĕрет-и – Л. Лаптева уяса тăман, инкек тӳсекен тата хăйне кĕтекен патне васканă. Çакăншăн ăна районтан та, республикăран та пĕрре мар Хисеп хучĕсемпе, укçан парнесемпе чысланă.

Паян Лида аппа тивĕçлĕ канура пулсан та ял çыннисене пулăшма хатĕр пулнипе палăрса тăрать. Çавăнпах унран пулăшу ыйтакансем те, унпа канашлакансем те чылай. Юратаççĕ ăна Лаполкашсем. «Хăв чуну ыйтнипе суйласа илнĕ, çынсем шанакан ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа халăха пулăшнинчен пахи мĕн пултăр тата?» – ыйтуллăн тинкерчĕ пушă вăхăтра пахчара ĕçлеме юратакан хĕрарăм манпа сыв пуллашнă май. «Ялти выльăх тухтăрĕ», – тесе уйрăлтăм эпĕ унран вăл халăхшăн пурнăçланă ĕçĕсемшĕн хĕпĕртесе.

**П. ВОРОБЬЕВ.**

# Асăрхануллӑ, тимлĕ пулăр!

## Вĕренӳ

Çамрăк кĕрнеклĕ арçынсем (20–40 çулхисем) çынсенчен тĕрлĕ пулăшу ыйтма пултараççĕ: вăхăтлăх хваттере яма, машина вăхăтлăх арендăна илме, вĕсене кĕсье телефонĕ е SIM-карта сутма, пĕр-пĕр хатĕре е япалана йăтса пулăшма. Вĕсем вокзалсене, магазинсене, кинотеатрсене тата нумай çын пулакан ытти вырăна çитме тăрăшаççĕ, мина тата сирпĕнекен ытти хатĕрсен муляжĕсене пăрахса хăвараççĕ. Аптекăсемпе магазинсенче хими хатĕрĕсене пысăк калăпăшпа туянма пултараççĕ. «Диверсантсем» тĕрлĕ учреждениепе интересленме те, сăн ӳкерчĕксем тума та ӳркенмĕç. Хăйсене мигрантсем тесе ĕçе вырнаçма та пикенĕç.

Вĕренӳ ноябрĕн 20-мĕшĕччен пырать. Вăл 2013 çулта Хусанта иртterme палăртнă Универсиадăпа çыхăннă. Вĕрентӳ пирĕн республикăра терроризм хӳтлĕхĕ мĕнле шайрине кăтартса парĕ: право сыхлакан органсен ĕçĕ кăна мар, граждансен асăрханулăхĕпе тимлĕхĕ те куç умне тухĕ. Çавăнпа та «диверсантсен» ретĕнче пулма пултаракан çынна асăрхасан çак номерсемпе шăнкăравласа пĕлтермелле: 02 е 62-6-67.

**РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕ.**

## Спорт

# Ильинкăна – вăй виçме

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче, шăмат кун, Ильинкăри вăтам шкул спорт залĕнче «Анлă Атăл» кубока çĕнсе илессишĕн ăмăрту иртет.

Программăра: волейбол (арçынсем), шахмат вăййи (1 арçын,1 хĕрарăм), сĕтел çи теннисĕ (1 арçын, 1 хĕрарăм), армрестлинг (1 арçын, 1 хĕрарăм). Ăмăрту 10 сехетре пуçланать.

**Шкул дирекцийĕ.**

## Тав тăватăп

Хуйхă-суйхăна пĕччен чăтса ирттерме йывăррине пурнăç кашни утăмрах кăтартать. Иртнĕ çу кунĕсенче пирĕн килти хушма хуçалăхри ĕне йывăр чирлесе ӳкрĕ. Ура çине те тăраймасть. Пулăшу ыйтса Çатракассинчи ветеринари участокне çитрĕмĕр. Кунта пирĕн ыйтăва Елизавета Геннадьевна Степанова ветфельдшер йышăнчĕ, пулăшма шантарчĕ. Эпир хамăр хуйхăпа пынă кунран ĕне ура çине тăрса улăха тухса кайиччененех выльăх тухтăрĕ пирĕнтен уйрăлмарĕ.

Пире çак йывăр вăхăтра ӳркенмесĕр пулăшнăшăн Елизавета Геннадьевнăна, каярах юлса пулин те, пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Çĕньял Хуракассинчи Авиловсем.**

Инкек куçа курăнса килмест. Ноябрĕн 12-мĕшĕнче касçхине пирĕн хуçалăхра инкек пулчĕ – пушар тухрĕ. Ялти çамрăксем вăхăтра асăрханипе тата пулăшнипе пушара сарăлма памарĕç, пурăнмалли çурт-йĕре сыхласа хăварчĕç. Çавна май Çатракасси тата Кашмаш ялĕсенчи çамрăксене, пушар хуралĕн ĕçченĕсене пушара сӳнтерме пулăшнăшăн пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Çатракассинчи Жоржиковсен çемйи.**

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнче пурăннă Александр Ильич Жирнова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пайланăшăн тăвансене, ял-йыша, пускилсене чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Жирновсен çемйи.**

## Пĕтĕм тĕнчери диабет кунĕ

# Хальхи вăхăтри «эпидеми»

Сахăр диабечĕ – вăраха каякан йывăр чир. Унпа чирлекенсен йышĕ ӳссех пырать. Сахăр диабечĕпе чирлени чĕре тымарĕсене, пуç мимине, ал-урасене, пӳресене, куç сетчаткине те пырса тивет. Вĕсем йĕркеллĕ ĕçлеме пултараймanni вара миокард инфаркчĕ е инсульт, гангрена е суккăр пулас хăрушлăх патне çитерме пултарать.

Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлав организацийĕ палăртнă тăрăх тĕнчере кашни 10 çеккунтра сахăр диабечĕпе чирлĕ çын вилет. Çапла вара – çулсерен 4 миллион çынна яхăн.

Мĕн-ха вăл диабет? Çын организмĕ хăй тĕллĕн инсулин кăларма пултарайманнипе (ачасен) тата ăна çителĕксĕр кăларса тăнипе (аслисен) пуçланать çак чир.

Пĕрмай çăвар типни, ĕçес килни, час-часах çăмăллипе тула каяс килни, ӳт-пӳ йывăрăшĕ чакни, тĕрлĕ инфекцие çăмăллăнах çаклатни – эсир диабетпа чирлине пĕлтерме пултаракан паллăсем. Çак чирпе кашниех аптăрама пултарать, уйрăмах 40 урлă касçнисем. Ӳт-пӳ йывăрăшĕ виçерен ытлашши, çын питĕ самăр пулни те сахăр диабетне çул парать. Кунсерен сахал хускану туни, çемьере çак чирпе чирлекенсем пурри те шутлаттармалла. Пепке 4 килограмран пысăкрах виçепе çурални (е ача кĕтнĕ вăхăтра хĕрарăм хăй диабетпа аптăранă), организмра холестерин нумаййине палăртнă пулсан тата юн пусăмĕ пысăкки – çаксем те чир аталанма пултарнине кăтартаççĕ. Чĕре тымарĕн чирĕсем те сахăр диабечĕпе чирлес хăрушлăха пысăклатаççĕ.

Чир пуррипе çуккине тĕрлĕ майсемпе тĕрĕслесе пăхма пулать. Чи ансат мел – юн пани. Анализ юнри сахăр 11 ммоль/л шайран пысăкрах пулнине кăтартать пулсан çын сахăр диабечĕпе чирлĕ пулма пултарассине пĕлтерет. Глюкометрпа та (аптекăсенче сутаççĕ) çак шая тĕрĕслесе пăхма пулать.

Эндокринологсем пĕлтернĕ тăрăх нумайăшĕ хăйсем сахăр диабечĕпе чирлине пĕлмеççĕ те. Çавăнпах чир аталанать. Апла пулсан хăвăрăн врачпа канашласа чире вăхăтра асăрхаттарма тăрăшмалла. Ӳт-пӳ йывăрăшне пĕчĕклетессипе, тăтăшах хусканусем тăвассипе çине тăрса ĕçлемелле. Йĕркеллĕ апатланмалла: пылак, чустаран хатĕрленĕ тата çуллă апат вырăнне ытларах пахча çимĕç, улма-çырла, пăтă çимелле. Çакна аслă ӳсĕмрисен тата тăвансем хушшинче диабетпа чирлекенсем пуррисен уйрăмах çирĕп пăхăнмалла.

Сахăр диабечĕпе чирлисем хăйсен сывлăхне контрольлесе тăраççĕ пулсан вĕсем чирлĕ маррисенчен те нумайрах пурăнма пултараççĕ. Мĕншĕн тесен çак чир сахăр шайне, холестерин, юн пусăмне тĕрĕслесе тăма, эрех-сăрапа, пируспа сыв пуллашма тата сывă пурнăç йĕркине пăхăнма ыйтать. Чир тĕлĕшпе консультаци кирлисем яланах эндокринолог врач патне пыма пултараççĕ.

**Т. ШАРИКОВА, эндокринолог врач.**

## «Солнышко» ача сачĕ хыпарлать

# Уяв – çĕнĕ залра

Иртнĕ кунсенче «Солнышко» ача садне çӳрекен ачасем те кĕр ĕçĕсем вĕçленнине юрă-ташăпа уявларĕç. Кăçалхи уяв тин çеç юсаса çĕнетнĕ капăр музыка залĕнче савăнăçлăн кĕрлерĕ. Юсав ĕçĕсене вара ачасен ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе пурнăçлама май килчĕ. Ачасем те, кунта ĕçлекенсем те уншăн питĕ савăнаççĕ, ашшĕ-амăшне чунчĕререн тав тăваççĕ. Кĕрхи уявра вара илемлĕ залсăр пуçне ачасене Кĕр Патши, пахча Катемпийĕ, Вăрман мучипе ытти чĕр чунсем килсе савăнтарчĕç. Икĕ-виçĕ çулхисем юрласа ташланисĕр пуçне вăйăсем те выляреç. «Кам чи малтан пахча çимĕç пуçтарать» ятлă ăмăртура шăпăрлансем вăй хурсах тăрăшрĕç. Ашшĕ-амăшĕсем вĕсене пĕчĕкренех ĕçе хăнăхтарни курăнчĕ çакăнта. Е.П. Любимова йĕркелесе пынă уяв ачасене килĕшрĕ. Халĕ вĕсем Хĕл Мучипе тĕл пулма хатĕрленеççĕ.

**С. ГУСЕВА, воспитатель.**

# Пурнăçра лайăххи ытларах

## Сиенлĕ йăласемсĕр

Çулсерен ноябрь уйăхĕн виççĕмĕш кĕçнерни кунĕнче тĕнчери чылай çĕр-шывра пирус туртнипе килĕшмен куна паллă тăваççĕ. Ăна 1977 çулта Америкăри шыçă чирĕсене хирĕç кĕрешекен общество пуçарнипе ирттереççĕ.

Çыннăн яланах суйлама ирĕк пур. Вăл пурнăç тăршшĕпех пирус туртса пурăнма та пултарать, ӳпкесене çав тĕтĕм-сĕрĕмрен май пур таран сыхласа пурăнма та. Иккĕмĕш тĕслĕхĕ паянхи кун ыйтнине тивĕçтерет, пурнăçа тăсма пулăшать. Апла пулсан пуласлăх пирки шутлакан çыннăн пирус туртма пăрахмаллах.

Кирек кам та пирус туртма пăрахма пултарать. Ăна пурнăçлама йывăр мар.

Чи малтанах акă мĕн ăнланса илмелле: «пăрахмалла» сăмах нимĕнле ыра самантпа та уйрăлмалла тенине пĕлтермест. Пачах хирĕçле – çапла тусан сире лайăх кăна (сывлăх тĕлĕшпе те, укçа-тенкĕ перекетленессипе те).

«Тепĕр пирус, хыççăн... пăрахатăп» темелле мар. Ку татах та тăсăлма пултарать. Пирус туртма пăрахасси çинчен хăвăра валли йышăну турăр пулсан урăх пĕр пирус та çăвара ан хыпăр.

Туртакана ăмсанмалли нимĕн те çук, ăна шеллемелле кăна. Туртманнисемпе танлаштарсан унăн тĕрлĕ чир-чĕр ытларах çеç. Чирсене пула лайăххи сахалрах. Эсир наркомана ăмсанмастăр вĕт-ха. Кунта та çавăн пекех.

Туртма пăрахма шутларăр пулсан çак йĕркене пăхăнмалла. Сирĕн çумăрта нихăçан та пирус ан пултăр. Туртакансемпе тĕл пулассинчен сыхланма кирлĕ мар. Хăвăра тĕрĕслетĕр кăна. Пирус туртма пăрахнипе пурнăç йăлине улăштармалла мар. Çавăн пекех ĕçлемелле, канмалла, савăнмалла тата ытти те. Вара ăнăçу кĕттермĕ.

**Л. ИВАНОВА, психиатр-нарколог.**

## Прогноз погоды

| | среда 16 ноября | | | | четверг 17 ноября | | | | пятница 18 ноября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -5 | -5 | -4 | -4 | -7 | -8 | -6 | -4 | 0 | -4 | -5 | -6 |
| Давление мм | 739 | 739 | 740 | 741 | 742 | 742 | 739 | 735 | 733 | 737 | 741 | 744 |
| Влажность % | 92 | 93 | 83 | 85 | 89 | 94 | 83 | 87 | 95 | 90 | 80 | 81 |
| Ветер м/сек | З 6 | З 5 | З 5 | С-З 6 | З 4 | З 4 | Ю-З 4 | Ю-З 6 | З 6 | С-З 8 | С-З 6 | С-З 5 |
| Солнце восход/заход | | 08:31 | 16:44 | | | 08:33 | 16:42 | | | 08:35 | 16:40 | |
| Луна восход/заход | | 21:37 | 12:53 | | | 22:56 | 13:16 | | | - | 13:35 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления

для пайщиков
СБЕРЕЖЕНИЯ
• стабильный доход
• возможность пополнения и частичного снятия
ЗАЙМЫ НА ЛЮБЫЕ ЦЕЛИ
• на ремонт и подготовку к зиме
• для пенсионеров
ЛЬГОТНЫЕ УСЛОВИЯ
• на покупку и строительство жилья под МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ “СОДРУЖЕСТВО”
Отделение № 3, с.Моргауши
ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
www.kpksodrugestvo.ru
62-6-86
8 900 333 0001

**Продается корова. Тел.: 8-961-346-42-53.**

* * *

**Куплю предметы старины: ама, хушпу серебряные от 20 000 до 100 000 рублей. Деньги сразу. Возможен залог под 0,4 процента в день. Тел.: 8-937-375-88-55. 5-10.**

* * *

**Поделюсь секретами, как заработать столько денег, сколько хочешь, и работа для врачей. Тел.: 8-906-386-07-57. 2-2.**

* * *

**Продается дрова березов. 5 куб. м. Цены договорные. Возможна доставка. Тел.: 8-903-065-58-68. 1-2.**

* * *

**При МАУ ДОД «ДЮСШ-ФСК «Сывлăх» открывается секция вольной борьбы под руководством Каракулова Александра Николаевича, тренера-преподавателя высшей категории, судьи Всероссийской категории по вольной борьбе, мастера спорта. Набор производится в здании ФСК по вторникам, четвергам, пятницам с 14-00 часов. Тел.: 62-3-75, 62-3-58.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 1-5.**

* * *

**Çулталăкри хĕрлĕ-шурă тынашки сутатăп. Тел.: 8-903-063-86-84.**

**Компания продает анионовые прокладки, подгузники и защитные средства от электромагнитных и радиационных излучений. Тел.: 8-927-850-18-58. 3-10.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 4-5.**

В объявлении собственника земельной доли Ижутовой Светланы Васильевны, о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 29.01.2011 года № 6 (7860) стр. 4, во 2 колонке, в 7 и 9 абзацах вместо «ЗАО «Колос» следует читать «КДП «Гигант».

* * *

В объявлении собственников земельных долей, о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 27.11.2010 года №№ 99-100 (7841-7842) стр. 6, в 3 колонке, в 7 и 9 абзацах допущена опечатка. Вместо «кадастрового квартала 21:17:050801» следует читать «кадастрового квартала 21:17:080201».

* * *

В объявлении собственника земельной доли Яндушкина Александра Матвеевича, о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 24.10.2009 года № 85 (7725) стр. 6, в последней колонке, в 9 абзаце и в районной же газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 9 апреля 2011 года в №№ 25-26 (7879-7880) стр. 4, в 1 колонке, в 3 абзаце допущены опечатки. Вместо «в восточной части кадастрового квартала 21:17:080901» следует читать «в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:080501».

* * *

Мы, собственники земельных долей Блинова Венера Германовна, Морозова Любовь Федоровна, Филиппова Раиса Гавриловна, Степанова Роза Ивановна, объявляем о выделении земельных участков в счет земельной доли общей площадью каждый по 1,84 га, расположенных на территории землепользования СПК «Оринино» Моргаушского района Чувашской Республики, Орининского сельского поселения, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:092701.

Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Орининского сельского поселения.

* * *

Итоги проведения публичного слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» на территории Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики. 10 ноября 2011 года прошли публичные слушания по проекту решения муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

На указанных выше публичных слушаниях было принято следующее решение: одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:0:308, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, для ведения прудового хозяйства, площадью 596136 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:300101:152, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кораккасы, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:300101, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 619 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:091101:122, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:091101, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 2737 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 15.11.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4362.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.